Петĕр Ялкир

**Чăваш ен**

Ăçта пуçланнă Чăваш Ен?
Пăла-Çавал тăрăхĕнче.
Ялсем лартма кашни ĕшне
Чăвашсене илнĕ чĕнсе.

Мĕн илĕртнĕ чăвашсене
Куçса килмешкĕн çĕн çĕре?
Ыр çут çанталăк ăшшине
Тăнă туйса кашни чĕре.

Мĕнле çĕкленнĕ Чăваш Ен
Çыннисене савăнтарса?
Вăрман хăртуçăн çулсерен
Тыр пуссине пынă сарса.

Чăвашсене ĕçчен тесе
Мĕн-ма мухтаççĕ тĕнчипех?
Ĕçре вăр-вар пулма вĕсем
Вĕреннĕ пăрчкантан текех.

Хаваслă шăпчăк юрăça
Чĕннĕ çынсем сад пахчине.
Пынă чăваш хастарланса
Вĕреннĕ май ун юррине.

– Тум пит хитре сирĕн хĕрсен! –
Тесе Детройт та палăртать.
Шеп măкăньрен илем илсе
Кашни пике капăрланать.

Уявсенче хавас пулма
Хавхалантарнă-ши мĕскер?
Çитĕнтереç кунта хăмла,
Юрлаттарать çав пит чипер.

*Ялкир, П. Чăваш ен / П. Ялкир // Суйласа илнисем / П. Ялкир. – Шупашкар, 2008. – С. 16-17.*